Иванов К.В. Тăлăх арăм : (юмах) / К.В. Иванов // Çамрăк большевик. – 1940. – 1 çĕртме.

# ТĂЛĂХ АРĂМ*)

## (ЮМАХ)

Юмах юпа тăрринче,
Хам урхамах çиййĕнче.
Вĕçсе—вĕçсе пытăм та
Килтĕм тухрăм çаканта
Аслă вăрçă хушшине.
Асап курать çичĕ ютра
Çичĕ тăван вăрçăра.
Хам та чăваш шуçăмпа,
Часах сисрĕм чунăмпа
Вĕсем чăваш иккенне.
Ырă сунтăм вĕсене:
— Ырă чăваш тăвансем,
Пĕтчĕр сирĕн тăшмансем.
Çут хĕвелпе çут тĕнче
Вăй паччăр çак кунсенче.
Çичĕ тăван çапăçать,
Çапăçать те тытăçать.
Сăсар çĕлĕк пуçĕнче,
Шурă тумтир пĕвĕнче,
Симĕс тукмак аллинче,
Сенкер сăнă хыçĕнче.
Вĕçет кăвак урхамах
Кайăкран та хытăрах
Вĕçет, çӳрет тулкăрса,
Тăшман пуçне таптаса.
Вăрçă шавĕ шав кĕрлет,
Таврашри çĕр кисренет,
Тăшман пуçĕ çĕмĕрлет,
Хура юнĕ сирпĕнет.
Çавна курса тăнипе,
Хам та хытă пăхнипе,
Сехри хăпса тухнипе
Урхамахăм сикрĕ те,
Илрĕ кайрĕ тулаѕа,
Пĕр еннелле çавăрса.
Ырса çитсен тăтăмăр.
Унта çакна куртăмăр:
Çеçен хирте çил вылять,
Сарă ыраш хумханать.
Сарă ыраш хумханать,
Чăваш чунне йăпатать.
Ирех тăрса пит çуса,
Ирех хырăм тăрантса,
Йĕртсе килет хунемĕш
Çичĕ кинне тырă вырма.
Çичĕ тăван ют çĕрте,
Арăмĕсем çак хирте
Тырă выраççĕ юрласа.
Ашĕ çунать паян унăн.
Ытла ăшĕ çуннипе,
Утрĕ урапа патнелле.
Çичĕ кашăк ывăтрĕ,
Çапла сăмах каларĕ:
— Пӳлĕх, кăтарт тĕрĕсне,
Кашăк, кала чăннине:
Хăш кин юнлă кашăклă —
Пĕтнĕ унăн упăшки
Кашăк ӳкрĕ çаврăнса.
Ӳкрĕ—тăчĕ юн пулса
Кĕçĕн кинĕн кашăкки, —
Пĕтнĕ иккен упăшки.
Йĕре-йĕре пырать кин,
Çӳлĕ тăва курчĕ тин.
Курчĕ мĕскĕн курасса,
Ларать çӳлĕ ту курăнса,
Тĕтре çӳрет шуралса,
Çӳлĕ ту тавра явăнса.
Ылттăн хĕвел савăнмасть,
Çутă куна çутатмасть:
Пĕлĕт айне пытанать,
Хăй çуттинчен вăтанать.
Çил тухать те çил каять,
Хурлăхлă юрă юрлать.
Çӳлĕ тăвăн тĕлĕпе
Çăхан карать çăварне
Хăйĕн çивчĕ сăмсипе,
Апат тупне сиснипе.
Ту тăрринче тӳрт ларать,
Чăваш хытă сывăрать.
Кун килет те кун иртет, —
Чăваш хытă сывăрать.
Шăппăн выртать, хусканмасть,
Ун арăмĕ хурланать.
Йĕре-йĕре хуйхăрать,
Упăшкине ыталать,
Анчах арăмĕ йĕнине
Вăл сисес çук чĕрипе.
Ĕмĕр-ĕмĕр йĕрсен те,
Чĕрĕлес çук куççулĕпе.
Вара тăваттăмĕш кун
Çакăнчĕ те пĕтрĕ чун,
Хăй упăшкин çӳçĕпе,
Вичĕ ылттăн пĕрчипе.
Эпĕ те вара хурланса,
Икĕ чуна асăнса,
Урхамаха выртартăм,
Чӳклерĕм те хăвартăм.

---

*) Кĕскетсе пичетлетпĕр.